Никита Ларионов

# Анфиса, Анисса

Шупашкар
«Çĕнĕ Вăхăт»
2013

821.512.111
849(2Рос=Чув)6-4
25

**Никита Ларионов**
**Анфиса, Анисса.** - Шупашкар, «Çĕнĕ Вăхăт», 2013. - 32 стр

© Ларионов Н. Л., 2013

## Мăшăрăм, Анфиса Петровна 80 çул тултарнă май

Епле килпетлĕ кун вăл Сурхури!
Çемçе юр ӳкнĕ, кăшт çеç шăнтнă.
Хĕвел кĕретĕн пăхтăр, култăр-и...
Вăрман, уй-хир – йăлт хăтлă.
Кĕрекере хаваслăх пултăр-и!

Çырми-çатри те пур-ха Чăвашра.
Пурах Каçал, унтан, ак, – Элĕк.
Хур-кăвакал-и – йышлă улăхра;
Шурлăхсенче – пик... пик... текерлĕк.
Тарпа пиçетĕн шăрăхра.

Çулсен шутлавĕ, кур-ха – сакăр вуннă!
Ман мăшăр Фиса-Анисса
Ĕçпе ӳссе çынла хисеплĕ пулнă.
Утасчĕ мар-ха тайăнса.
Ача чухне чупса вылянă,  кулнă.

Хуйхи-суйхи сисмесĕр килчĕ пирĕн.
Пурнатпăр-ха. Пурнасчĕ-ха.
Чир-чĕр усалĕ, кай эс, сирĕл!..
Савса пуç тайăр ватлăха!
Куллен вăй кӳтĕр уйăм-хирĕм.

2012.01.07

# Фиса, эс кайрăн...

## Кун кĕнекинчен

2012. 08. 19. Пан улми сăпасĕ. Ирпе пĕлĕтлĕрех уяр. Выльăх пăхрăм. Качака сурăм. Компьютер ярса кăштах «Сĕрен кĕперĕ» калавсен пуххинчи малтан çапнине тӳрлетсе лартăм. Сывлăш çавăрса илсен тачка тĕксе уя тырă вырма кайрăм. Çимелли сахал пулчĕ, часах выçăп тенĕччĕ. Кураксем ларасран лаптăка урлă-пирлĕ çип карни – вырăнсăр. Шăчă çине çакнă пластмас кĕленчесем çилпе ӳксен ăна тăратма кĕрсен хам та таптанипе лутăрканнă. Вырма кансĕр. Çурхи тулă çӳллĕ ӳснĕ. Çыхă лайăх пулать. Тĕмсем пек хурса пытăм кĕлтесене. Вырса пĕтертĕм. Шутларăм: аллă сакăр кĕлте. Малтанхисем пĕчĕкрех, кайранхисене хулăмах çыхрăм. Сахал пулин те иккĕ апат çыртрăм – помидор, çур литр ытларах сĕт янă чей, татăк çăкăр. Малтан тачкăпа туртса килсе кĕлтесене сушила çине улăхтарса тĕм евĕр  сарса хутăм. Пӳрте кĕрсен салат турăм та пĕр черкке эрех ĕçрĕм. Фиса тăпăрчă икерчи, пан улми кукли пĕçернĕ. Çирĕм. Фиса ыйтать,  калатăп  епле вырнине, миçе кĕлтине. Уя иккĕмĕш хут кайрăм. Пысăк кĕлтесемпе тиев йывăртарах пулчĕ. Тачкăна каçă çине хыçран çитнĕ çын пулăшнипе хăпартрăм, урлă каштасем тĕлĕсенче те чарăнса тăмарăм. Сăрта кана-кана улăхрăм. Больница картишĕнчи хапхаран тухам тесе шутларăм. Хупă пулчĕ. Кăштах тавăрăнса халăх кĕрсе çӳренĕ çĕртенех тухрăм. Тимĕр урлашка урлă каçас чух тачка тытса тăма машина кĕтсе тăракан хĕр пулăшрĕ. Хыçал енчен сарай патне çитерехпе асăрхамасăр кӳршĕсен сарайĕнчен юхса тухнă сысна каяшĕ çине пусрăм – аякки шăтнă тапочка йĕпенчĕ. Фиса тухрĕ. Кĕлтесене сенĕкпе çӳле ыватрăм, Фиса тыта-тыта тăчĕ. Кĕлтесене вăл сушила тавра тăрата-

тӑрата тухрӑм терӗ. Качаки аякран ҫисе тӑчӗ ҫеҫ-ха, таки урапа ҫинех хӑпарса кайрӗ. Уншӑн вӑйӑ. Пӳрте кӗрсе тапочка улӑштарса тӑхӑнса тухрӑм. Качака сурӑм. Ӗҫ пӗтерсе кӗрсен тапочкӑна, чӑлхана ҫуса балкона ҫакрӑм. Пылпа чей ӗҫрӗм телевизор ятӑм. Тӑххӑр иртсе кайнӑ.

2012. 08. 20. Уяр ир. Ҫил ҫурҫӗр-хӗвел анӑҫӗнчен. Выльӑх пӑхрӑм, качака сурӑм. Пӳрте кӗрсен апатлансан калавсен пуххин страницисене тӳрлетсе лартӑм. Унтан тухрӑм, почтӑна ҫитсе телефоншӑн, интернетшӑн тӳлерӗм. Принтера тасатас, заправка тӑвас тесе  ку ӗҫе пурнӑҫлакансен офисне темиҫе те ҫитрӗм – ҫыннисем ҫук та ҫук. Магазинта сехет валли батарейка, унтан ҫӑкӑр туянтӑм. Компьютер тӳрлетекенсенчен пӗри килнӗ, вӑл хӑй Шупашкара каятьмӗн те, принтер пайне парса хӑвартӑм. Шӑллӗ пымалла. Килте каллех страницӑсене тӳрлетсе лартӑм. Компьютерщик патне кайрӑм. Каллех кӗтмелле пулчӗ. Анкартине ҫитсе килтӗм. Ҫынни пур. Пӗр сехет тӗлне пыма каларӗ. Пытӑм. Йӗркеленӗ. Киле таврӑнсан шӑлтӑрмана вырнаҫтарса лартрӑм, темиҫе страница пичетлерӗм – лайӑх, вараламасть. Малтан таса мар кӑларатчӗ.

Велосипедпа анкартине кӗрсе тухса уя кайрӑм, ҫӗр улми, хӗрлӗ кӑшман апат валли кӑларса килтӗм. Таврӑнасшӑн анакртинче тӑкӑннӑ пан улми пуҫтартӑм, хӑяр татрӑм. Пур япалана тиесе киле ҫитрӗм. Фиса мана хирӗҫ качака сумалла тухать. Пӳрте кӗрсе пӑтӑ ӑшӑтса ҫирӗм, кӑштах чей ӗҫрӗм. Тухсассӑн ҫурт умӗнчи хӑяра  татрӑм. Качака валли пан улми турарӑм. Качакана Фиса сурӗ.

2012. 08. 21. Ҫӗрле ҫумӑр ҫурӗ. Ирпе пӗлӗтлӗ. Ҫил вӑйлӑ. Выльӑх пӑхрӑм, качака суса кӗтӗм. Апат ҫисен – тренировка. Сахал ҫӳрерӗм – тапочка кӗли пӗр пек шайра мар. Пӳрте кӗрсе тапочка ӑшне ҫыпӑҫтарнӑ ҫӑматӑ татӑкне наждакпа хырса ҫӳхетрӗм. Пуҫтарӑнса «Хӗлхеме» ҫӑвӑнма

кайрăм. Тавăрăнсан чей ĕçрĕм пулин те хырăм хытă выçса кайрĕ. Пиçнĕ çĕр улмине шаритлесе çирĕм. Тухрăм, чăхсене пĕр кĕлте парса тĕшĕллеттертĕм. Кĕрсессĕн кофе вĕретсе ĕçрĕм. Çумăр çумарĕ, çанталăк пĕлĕтлех тăчĕ. Выльăха каçхи пăхрăм, качака сурăм. Хупса кĕтĕм. Çил вăйлă. Сивĕ. Телевизорпа «Вести» пăхрăмăр. Интернетпа шахмăтла вылярăм. Малтан ничья сĕнчĕ – килĕшрĕм. Иккĕмĕшне выляса ятăм. Теприне: «Игра окончена. Вы выиграли», – тесе çырса пачĕ. Пурне те шуррипе вылярăм.

2012. 08. 22. Кĕнеке издательствипе калаçасшăнччĕ - май килмерĕ. Киоскра хуратмалли, лавккара çăкăр туянтăм. Çурт умĕнчи йăранран пĕр пуç купăста касса кĕтĕм. Çумăр çăвать. Кĕнеке издательствипе, хĕрарăм редакторпа çыхăнтăм. «Мĕншĕн чарăнса ларчĕ манăн?» – терĕм хам Шупашкарта пулнă хыççăн хурав пулманран. «Ма чарăннă. Кĕнеке тухнă, – терĕ Галина Алексеевна Антонова. – Валерий Николайч автор алă пусса панă терĕ». Тарăхса кайрăм. «Эпĕ в печать тесе алă пусман. Тӳрлетмелле. Мăшкăллас терĕр-и?» – «Ун пек шутламан». – «Çапман пулсан чарса лартăр. Тӳрлетмелле», – терĕм тарăхсах. Лăпланмалла çывăрмалли пӳлĕмре вырăн çине выртрăм. Алăкра шăнкăрав пулчĕ. Фиса, кухньăрискер, пырса уçрĕ. Калаçу илтĕнчĕ. Тăрса пăхрăм. Светлана! Вăл отпуск памаççĕ тенĕччĕ. Халь вунă кунлăх кану илнĕ. Килĕнче пахчара пулнă, çĕркаç Канаша çитсе тăхлачсем патĕнче çĕр каçнă. Ак çитрĕ. Хамăн та чун хăпартланса кайрĕ. Хĕпĕртерĕм. Амăшĕ чунтанах пăшăрханса калаçатчĕ, хамăра пăхма ача çуратса ӳстермен эпĕр тетчĕ. Пит-куçĕ çиçет халь. «Ура ыратнипех аптратăп, подъездран хăпарсан макăрса ярасла ыратать», – шав калаçать хĕрĕмĕрпе.

2012. 08. 23. Кĕçнерни. Пĕлĕтлĕрех уяр. Выльăх пăхрăм, качака сурăм. Тренировка. Тикĕс асфальт тăрăхне ултă хутларăм. Светлана пасара иккĕ кайса килчĕ. Кĕнекеçĕ патне çыру ямашкăн комьютерпа çапмалла малтанласа хут çине йĕрмеллесе хутăм. Пуçтарăнса велосипедпа уя кайрăм. Люцерна çулма. Çитсенех апат пĕçерме çĕр улми кăларса хутăм – виçĕ кăк, унтан çырмана анса çавана лакăмри шывра шăршанлантартăм, икĕ кĕленче шыв тултарса хăпартса хутăм: лапаткаланă чух йĕпетме. Люцерна йĕпе. Çил çурçĕр енчен. Çӳлтен тайлăмалла тăрхаллан çултăм. Çиччĕ тухрăм. Апат çыртрăм: икĕ çăмарта, чей.

Таврăнасшăн анкартине кĕтĕм. Светлана купăста касма пынă. Пан улми çирĕм. Хамăрăн çӳлти лаптăкри люцернăна çултăм. Урлăлла вун виçĕ кĕске паккус пулчĕ. Унтан – Ник. Степанчăнне, хăй малтанах каласа хунипе. Çăра акнă. Йĕпескер хала кăларсах илчĕ. Улмуççисем патĕнчи курăка май пур таран çултăм. Чейпе сыпса çăкăр çыртрăм. Унтан паккуссене сапаларăм. Кантăм. Виçĕ помидор çирĕм. Пан улми пуçтартăм. Çĕр улми, пан улми тултарнă хутаççене, çава хурса киле çитрĕм. Выльăх пăхрăм. Пӳрте кĕрсен яшка çирĕм. Пĕр черкке эрех ĕçрĕм. Фисăна мĕн-мĕн çулнине каласа патăм. Кăштах выртса кантăм. Каçхи ултă сехетпе Светланăпа амăшĕ сарайне тухрĕç. Эпĕ çиччĕ иртсен тухрăм. Апатне хатĕрлесе парса качака сурăм. Сĕтне Светлана пӳрте илсе кĕчĕ. Выльăха пуçтарса сарайне хупрăм. Фиса уçăлма юлчĕ. Пӳртре футбол пăхрăм. Кофе вĕретсе ĕçрĕм. «Светлана çĕр улмине питĕ тутлă тесе çирĕ», – пĕлтерет мана амăшĕ.

2012. 08. 24. Пĕлĕтлĕрех уяр çанталăк. Ирпе 15 градус ăшă. Выльăх-чĕрлĕх пăхрăм, качака сунă хыççăн пӳрте кĕрсен кĕнекеçĕсем патне яма çыру йĕркелерĕм, текста компьютерпа çапнă хыççăн тӳрлетсе пичетлерĕм.

Учительсен канашлăвĕ. Чăваш чĕлхи вĕрентекенсене курасшăн пултăм. Ирех пухăнса калаçнă-мĕн. Халĕ пленарлă ларура. Почтăна кайса кĕнекеçĕсем патне çыру ятăм. Лару пулас зала кĕрсе хам лайăх пĕлнĕ чăваш чĕлхи вĕрентекенĕсем çумне пырса лартăм, лару уçăличчен вĕсемпе ачасене мĕнле правилăна тĕпе хурса çыртарнине ыйтса пĕлтĕм, кĕнекеçĕсем киввинех тĕпе хунине евитлерĕм. Хам илсе тухнă «Т. А.» журналти статьяна кăтартрăм.

Килте апат çисен журналти хайлава вуласа вĕçне çитертĕм. Тухрăм. Чăхсене апат çитертĕм. Ку хушăра темиçе хут çумăр çăва-çăва иртрĕ. Кĕрепле илсе уя утрăм. Çумăр чашлаттарчĕ. Пуç çине утă тытса лартăм. Анкартине таврăнтăм. Пĕр çамрăкрах арçын, курткăпаскер, пан улми татса пама ыйтрĕ. Чунтанах тав тăвать çич-сакăр пан улми татса парсассăн.

Каçхине пӳрте кĕрсен чей ĕçрĕм, кăштах телевизорпа «Вăхăт» пăхрăм, унтан компьютерпа «Асамлă маç» файла кăлартăм. Темиçе çĕрте тӳрлетӳсем турăм. Çапах çын алли тĕкĕнмесĕр пичетленнĕ пулсан пит лайăхчĕ. Халь пăсрĕç. Те тӳрленет?

2012. 08. 25. Пĕлĕтлĕ. Çил хĕвел анăçĕнчен вăйлă вĕрет. Фиса мана Валя Власовăна помидор кайса пама калать. Вĕсен пĕтĕмпех хуралса ларнă тет. Эпĕ вăхăт çук тетĕп. Тӳртен анкартийĕпе кайсан инçе мар тет. Тренировкăна тухрăм. Асфальт тăрăхĕпе пилĕк çаврăм утрăм. Пӳрте ура пуссанах Фиса помидор тултарнă хутаç тыттарчĕ. «Валя Власовăна кайса пар. Йытти вĕрет. Эп шăнкăравлатăп, хирĕç тухтăр», – терĕ. Апат çисен малтан райадминистрацине кайса кирлĕ хутсене илтĕм, унтан шкула çитрĕм. Хамăра пăхма çын тупмалла. Эпĕ пĕлекен хĕрĕн амăшĕпе, шкулта хам вĕрентнĕскерпе, калаçнăччĕ: вун улттă тултарнă Наташа.

Киле таврăнсан апат çирĕм те канса илтĕм. Велосипедпа анкартине çитрĕм, кĕрепле илсе уя кайрăм. Утта

паккус туса тавăртăм. Икĕ кĕленче çырмаран шыв тултарса хăпартса хутăм.

Анкартине таврăннă тĕле Светлана помидор татса çине витнĕ пленкăна илсе сарайне кĕртсе хунă. Кунти утта паккусласа тавăртăм. Хăяр пуçтартăм. Татнă, пухнă пахча çимĕçне велосипед рулĕ çине çакса килти сарайне илсе çитертĕм. Фисăн кăмăлĕ лайăх. Ури ырататех-ха унăн. Хам çӳрĕттĕм те тет.

2012. 08. 26. Уяр. Сывлăм вăйлă ӳкнĕ. Выльăх пăхрăм, качака сурăм, пӳрте кĕрсен, апатлансан канса илтĕм те тренировкăна тухрăм. Яланхи тăрăхра çӳрерĕм, пиллĕк хутларăм. Райадминистрацин хӳтлĕх пайне çитсе хутсене парса хăвартăм. Анкартине кĕтĕм те унти сарайĕнчи çи-пуçа, кунчине татнă атта тăхăнтăм та çĕр улми çеçки çултăм.

... Каçхине телевизор пăхрăмăр. Интернетпа шахматла вылянă чух Валера калаçăва тухрĕ. Эп ăна илтетĕп, вăл мана илтмест. Шахматла вылятăп та Валеркăпа çыхăннă май васканипе икĕ йăнăш турăм: о-о вырăнне малтан ладьяна куçартăм, унтан о-о-о турăм. Хирĕçле вылякан ферзьпа  ман лашана тапăннине курмасăр фигурăна парса ятăм. Хурипе вылятăп та виççĕмĕш ретри пешкăна малалла тĕкрĕм, f 2 çине çитертĕм, унăн мат илес мар тесен королĕ умĕнчи пешкăна тĕкмелле: манăн ферзь çавăн тĕлĕнче-çке-ха. Ладйине çирĕм, вăл мана мат памалла шутпа фезьпа сикрĕ, эпĕ ладьяпа шах патăм, вăл короле уçă вырăна куçарчĕ. Эпĕ ферзь тухас пур, вăл мана иккĕ çӳресе мат лартать. Лаша кăлартăм: шах! Вăл парăнчĕ. Тек вылямарăм. Фисăпа Светланăна епле çĕнтернине хĕпĕртесе каласа патăм.

2012. 08. 27. Ирпе уяр. Часах пĕлĕт туртрĕ. Выльăх пăхса пӳрте кĕрсен, апатлансан райадминистрацин хӳтлĕх пайне, унтан хутсемпе шкула çитрĕм. Килте тепре апат

çыртсан анкартинчи сарайри сенĕке илсе уя утă типĕтме велосипедпа  кайрăм. Çава та илтĕм.

Утта анкартинчине те, уйрине те сенĕкпе сапаларăм. Уйра çĕр улми çеçки çултăм. Çеçкене алăпах пуçтарса ана хĕрне кăларса хутăм.

Светлана каçхи рейспа Канаша кайрĕ. Ăна ăсатнă хыççăн качакапа путеккине теприсенпе пĕрле çитерсе çӳрерĕм. Килти кĕреплепе велосипедпа уя кайрăм. Утта хальхинче пĕр вăрăм паккус туса пуçтартăм. Анакртинчине çуррине пĕр паккус, тепĕр çуррине, Кольăсенне илсе пынипе пĕрле – икĕ паккус. Киле килсен апат çирĕм. Эп тухнă çĕре Фиса качака сунă.

2012. 08. 28. Пĕлĕтлĕрех уяр. Чăхсене, качакапа путеккине пăхрăм, качака сурăм. Киоскран хаçат илсе килтĕм. Апатлансан шкула кайрăм, бланка çине ачана алă  пустарма амăшĕнчен парса ятăм. Киле килсен кăштахран утă салатма кайрăм. Малтан анкартинчине, унтан уйрине салатрăм. Велосипедпа çӳрерĕм. Çанталăк уяр, çил кăнтăр-хĕвел тухăçĕнчен.

Киле килсен апат çирĕм те кантăм. Унтан компьютер ятăм. Ĕнер çапнă калава вуласа тухрăм, пичетлерĕм. 171 страница таран пулчĕ. Кофе ĕçрĕм те тепре чейпе çăкăр, батон илсе уя кайрăм тачка туртса. Çитсенех утта тавăрса тухрăм. Унтан варринчи лаптăкрине тиерĕм. Илсе килтĕм. Сушила çинче – Фиса. Утта аялтан ывăтса тăтăм. Килнĕ чухне тачкăна лартса канмалла анкартинчи утта патакпа тавăртăм.

Уя тепре кайсан апат çыртрăм. Ĕнтĕркерĕм. Выртса та пăхрăм. Тиерĕм. Çырмари ансăр кĕпер урлă каçма кансĕр. Аппаланса, вăй кăларса сакăлтакран хăпартрăм, кĕпер урлă каçартăм, тăвалла кана-кана, вăй кăларса хăпартрăм тачкăна.

Сарай патĕнче Фиса кĕтсе илет. Парса пĕтертĕм. «Алăпа саркала-саркала хутăм», – тет вăл. Виççĕмĕш хут кайрăм. Çитсессĕн çерем çине выртса кантăм. Тачка пушăлла та ывăн-

тарать: çурт-йĕр тăвакансем валлискер-çке. Тиерĕм. Сенĕк, кĕрепле илсе килмелле халь. Çавна май хывса хунă кĕпе манса юлнă. Çанталăк ăшă, çÿхе трикопа та футболкăпа çеç эпĕ.

Киле çитес çул çине пăрăнсан чарăнса «Планетăра» çăкăр, гастрономра пĕр кĕленче сăра туянтăм. «Мана кăштах ярса пар», – терĕ Фиса шывпа чŷхенĕ куркана тытсассăн. «Ик сыпкăмпах пуçа кайрĕ»,– терĕ вăл тутине пăркаласа. Стакан çурă ĕçрĕм пуль эпĕ. Хал кĕчĕ. Анкартине кайрăм. Пĕррене кĕмест темле таптасан та, пăркăчласан та. Куршанкăллă вырăнпа аран тухрăм асфальт сарнă кил хушшине.

Сарайĕнче каллех Фиса сапала-сапала хурать каçхи сулхăнпа нŷрелнĕ утта. Тепĕр стакан сăра ĕçсе вăй илетĕп. Виççĕмĕш хут кайсан çулса хунă çĕр улми аврине кĕреплепе турта-турта ана айккине кăлартăм, йыт пырши пуснăскер илĕнесшĕн мар. Сарайне çитсен ун çинчен Фисăна евитлерĕм. «Мĕншĕн тытăнса тăчĕ ку тетĕп эп», – сăмахлать вăл. «Хăвах ĕçсе яр», – терĕ эпĕ сăра кĕленчине тытсассăн.

Фиса ывăнчĕ. Пŷрте кĕрсен малтан сĕт ĕçрĕм. Телевизор ятăм. Ывăннă питĕ. «Çумăрсем пуçланиччен утта кĕртсе пĕтертĕмĕр», – кăмăллăн пуплет мăшăрăм.

2012. 08. 29. Пĕлĕтлĕрех уяр çанталăк. Çил кăнтăр - хĕвел тухăçĕнчен. Ăшă 12 градус. Райадминисрацин хŷтлĕх пайĕнче пултăм, хутсене парса хăвартăм. Телефон номĕрне ыйтса çырса юлчĕ кăмăллă хĕрарăм.

Уя кайма пуçтарăнса тухрăм. Путвала антăм, нимĕн те вырнаçтармарăм: уя васкатăп. Тачка туртса çитрĕм. Ĕнер юлнă симĕс кĕпе маншăн тунсăхласа выртать. Çичĕ касă кăлартăм икĕ енчен те сенĕкпе хускатса шĕпĕнпе. Çапах кăларма йывăр, пуçтарма та япăх: çĕр çыпçăнать улма çумне. Виçĕ миххе тултартăм: вăрлăхлăх, шултри, вĕтти. Кĕпер çине пĕр миххине илсе хурса хăпартрăм тачкăна, урлă каштасем тĕлĕсенчен те чиперех каçрăм. Хăварнă миххе илсе

пырса хутăм, кана-кана илсе çитертĕм сарай патне тиеве. Сарайĕнче михĕсене çĕре илсе лартрăм. «Хам пӳртре пулман пулас, Маййăна шăнкăравласа каланă: хамăра пăхма палăртнă хĕр пенси илет - мĕн.», – пĕлтерчĕ Фиса.

2012. 08. 30. Çумăрлă. Выльăх пăхрăм, качака сурăм. Хӳтлĕх пайĕнче ĕçченĕ ăнлантарчĕ: манăн ку таранччен аппаланни вырăна ларман. Пасара тухрăм. Шăпах Маййăна куртăм. Ун телефонĕпе Виталий Павловпа, Çинка йăмăкăмăн ывăлĕпе калаçрăмăр. Паян пыраймастăп, мунча хутатăп терĕ. Документсене хӳтлĕх пайĕнчех ĕçлекен хĕрарăмран парса яма каларăмăр.

«Вавилонта» çăкăр туянтăм. Вĕтĕ çумăрпах йĕпентĕм. Килте апат çирĕм. Путвала ĕнер илсе килнĕ çĕр улмине антарма хатĕрлемелле. Фиса арбус туянма хуптĕрлет – ирĕксĕрех парсара тепре çитсе килтĕм.

Унччен-ха, Фиса Валерка патне шăнкăравлаттарасшăн. Компьютер ятăм та Валеркăна телефонпа çыхăнса интернетпа тухма сĕнтĕм. Эп каланине илтмест вăл, телефонпа çыхăнса та, пĕр-пĕрне курса та пуплерĕмĕр.

Арбус илсе килсен тухрăм. Газ баллонĕ туртмалли тачкăпа усă курмалла тăвас терĕм. Куса тăранĕ çаврăнмасть – хытса ларнă. Тертлене-тертлене, çу сĕрсе йĕркене кĕртрĕм. Путвал патне баллон туртмалли урапапа михĕсене илсе çитертĕм – урапа лайăх кусать. Хамăрăн пӳлĕм тĕлне те михĕсене урапапа илсе пытăм, хĕлле цементпа хытарнă тăрăхра вăл чиперех кусать. Пӳлмене тасатрăм, çĕр улми хывмалла турăм.

Пӳрте кĕрсен апат çирĕм, выртса кантăм. Çумăр чарăнчĕ.

Компьютер ятăм, калава малалла çапрăм, тӳрлетрĕм. Çумăр шăпăртатса çунă вăхăтра чăхсене апат патăм, качака сурăм. Пӳрте кĕрсен кофе вĕретсе ĕçрĕм. Шахматла вылярăм. «У вас кончилось время», – тесе çырса пачĕ. Тек вылямарăм.

2012. 08. 31. Пĕлĕтлĕ. Çумăрлă. Ирпе яланхиллех выльăх пăхрăм, качака сурăм. Пӳрте кĕрсен апат çирĕм те хӳтлĕх пайне антăм. Виталий документсем парса яман. Майя патне килне кĕрсе Виталин телефон номерне çырса илтĕм. Калаçрăмăр. «Кĕпе-йĕм çăватăп, пыраймастăп», – терĕ вăл. «Таксипе пыратăп, документсене хатĕрлесе хур», – терĕм ăна.

Хӳтлĕх пайне анса алă пустарма икĕ бланк илтĕм: хам тата Фиса валли. Эренаралла каякан машина таврашĕ çукши тесе пăхкаларăм администраци çурчĕ умĕнче. Магазин патнелле хăпартăм. Такси машинисем лараççĕ, хуçисем çук. Автовокзал патнелле çитсе килтĕм. «Такиси-и?» – ыйтрăм пĕр машинăн хуçинчен. Эренара кайрăмăр. Унччен эпĕ пушмак хывса атă тăхăнтăм: урам хушши пылчăклă – утма лекет.

Çитрĕмĕр палăк патне. «Ан тух», – илтĕнчĕ сас. Виталий кĕтсе тăрать-мĕн. Элĕке çитрĕмĕр. Биржăна кĕрсе справка илчĕ Виталий. Администрацин хӳтлĕх пайĕнче хутсене çыртарса йĕркелерĕмĕр.

Киле кĕрсен апат çирĕм, Фиса качакасемпе çӳренĕ, кĕчĕ. «Виталий шăнкăравларĕ. Тухрĕ терĕм ăна», – пĕлтерчĕ вăл маларах калаçнине.

Выртса кантăм. Çанталăк уяртса ячĕ пек. Компьютерпа ĕçлерĕм. Калава тӳрлетсе пичетлерĕм – тăватă страница, 185 таран.

Фиса душра çăвăнма кайрĕ. Качакасемпе кăштах çӳрерĕм. Кайран апат патăм та сурăм. Хупса кĕтĕм. Кофе вĕретсе ĕçрĕм, телевизор ятăм.

Кунĕпех çумăрлă, пĕлĕтлĕ пулчĕ. Шахмат. Ничья сĕнтĕм. Килĕшмерĕ. Унăн лаша, пĕр пешка сулахай енче, унтах королĕ. Сылтăм енче – вырăнтан тапранман виçĕ пешка. Манăн сылтăм енче виçĕ пешка, унтах король, слон вăрăм горизонтальте. Эпĕ корольпе умалла куçрăм. «Вы не наш игрок», – терĕ те хупса лартрĕ: ара, эпĕ слонпа сылтăмри икĕ пешкине

çиме пултаратăп, унтан сулахайри пешкине слонпа илсе фигура çухататăп. Корольпе сылтăмри пешкисем патне çитетĕп, лашипе ман пешкăсене çисе пĕтерейместь. Çĕнтеретĕп. Çĕнĕрен ятăм. Пĕр çӳрев хыççăнах ничья сĕнтĕм. «Играть еще раз» тухрĕ. Чартăм. Хупăнмасть. «Принутительная загрузка» пулчĕ.

Фиса душра Ф. Е. - па пĕрле çăвăнни çинчен каласа парать. «Киле çитсен пĕр стопка сăмакун ĕçетĕп те пăшт кăна çывăратăп тет. Сыпма юрататъ пулмалла», – пĕлтерет кăшт куларах.

2012. 09. 01. Пĕлĕтлĕ, çумăрлă. Качака сурăм. Пахчаран купăста пĕр пуç касса, виçĕ кишĕр кăларса килтĕм, Чăваш пичет киоскинче хаçатсем илтĕм. Апатлансан хаçатсемпе паллашрăм. Унтан пуçтарăнса – велосипедпа вăрмана. Питомник тĕлĕнчен антăм. Кайран икĕ çырма урлă каçрăм. Çумăр вăхăт-вăхăт çуса тăчĕ. Иккĕмĕш хут апат çыртсан велосипеда тĕксе завод ишĕлчĕкĕ еннелле тухрăм. Юлашки кофĕпе çăкăра çыртатăп, çумăр чашлаттарать, лаштра йывăç хӳттине тăратăп. Çумăр иртсе каясса кĕтетĕп. Сивĕпе чĕтрекен пултăм. Çумăр йăмсан велосипеда тĕксе утрăм, асфальт çине çитсен лартăм та педале вирлĕн пусса ăнтăлтăм. Синер сăртлăхне те çĕнтертĕм.

Пӳрте кĕрсен выртса кантăм. Качака сума тухрăм. Чăхсене тулă сапса патăм. Качакапа такашкине кăмпа ванасран михĕ айне хунă милĕке çыхса патăм. Сурăм. Хупса кĕтĕм. Кăмпана – тĕклĕ кăрăçа, хурăн кăмпине – Фиса суртларĕ. Апат çирĕм. Эрех те ĕçрĕм.

2012. 09. 02. Вырсарни. Янкăр уяр ир. Ăшă 7 градус, сывлăм вăйлă ӳкнĕ. Выльăх пăхрăм, качака сурăм. Апат çисен кăшт тĕлĕрсе илтĕм. Подъезд çума тухрăм. Люда каçхине çунă-мĕн. Çӳлти лаптăкпа картлашкине çурăм та – чарăнтăм. Пуçтарăнса «Хĕлхеме» çăвăнма кайрăм. Вĕри шывпа лайăх çăвăнтăм. Таварăнсан кантăм. Унтан, йăл илсен, салат

туса çирĕм, кофе вĕретсе ĕçрĕм. Лавккана кайса çăкăр, услам çу, икĕ кĕленче сăра туянтăм. Фиса качакасемпе çӳрет. Пуçтарăнса велосипедпа тухрăм, пахчари сарайĕнчен ик шĕпĕн, пĕр калак, çыхăсем илтĕм те – уя. Тăватă касă кăлартăм. Улмине пылчăкран, тăпраран тасатса михĕлерĕм, ана хĕрне улма çеçкипе витса хăвартăм.

Тавăрăннă тĕле Фиса качака сăвать. Апатне çитерсе пулăшрăм, сĕтне илсе кĕтĕм, апат ăшăтса çирĕм.

2012. 09. 03. Пĕлĕтлĕрех уяр çанталăк. Качака сурăм. Пуçтарăнса – уя велосипедпа. Радика мотоблокпа пыма каласа хăвартăм. Валерка килмелле.

Вунă касă кăларсан Валерка çитрĕ. Виççĕмĕш хут апат çыртма лартăм. Ывăла хамăн шĕпĕне тыттартăм. Вăл шĕпĕн аврине хуçрĕ. Хăйĕнне улма çеçки айĕнчен илсе патăм. Хам кин валли тесе илнĕ калакпа мар, аври хуçăк шĕпĕнпех кălартăм. Çумăр хыççăн çĕр çемçелнĕ, калакпах тухать, сенĕке сайра-хутра çеç тыткалатпăр. Кăларса пĕтернĕ тĕлелле Радик блокпа çитрĕ. Тасатрăмăр, михĕлерĕмĕр, тиерĕмĕр. Иккĕн кайрĕç, эп – велосипедпа. Баллон туртмалли урапапа часах пӳлмене хыврăмăр улмана. Качакана каçхи сурăм, Валерка пулăшса тăчĕ. Апатра эрех те ĕçрĕмĕр. Телевизор пăхрăмăр.

2012. 09. 04. Пĕлĕтлĕрех çанталăк. Выльăх пăхрăм, качака сурăм, Валерка пулăшрĕ. Анкартине çĕр улми кăларма кайрăмăр. Валерка тачка туртса, эпĕ велосипедпа. Кăштах уяртрĕ. Кăлартăмăр. Шĕпĕнпех. Сенĕк те тыткалатпăр. Пуçтарнă тĕле Фиса çитрĕ. Магазина кĕрсе тухнă вăл. Пире валли çимелли туяннă. Хамăр та илсе килнĕ-ха эпир термоспа чей, çăкăр, çăмарта. Капăр туяпа вăл. «Аптекăна Ирăран заказ парса Шупашкартан ярса пачĕç», – тенĕччĕ çӳллĕшне Валеркăна кирлĕ пек ларттарнă чух. Кăмăллă халь. Картана, кил хушшине эп сĕннĕ шĕшкĕ туяпа тухатчĕ. Пасара туясăрах кайса килетчĕ. Халь тростьпа сумлăн курăнать.

Валерка улмуççисем патĕнчи тăвată касса та паянах кă-ларасшăн. Унта питĕ нӳрĕ. Ĕç кăпăр-капăр пулмасть, пуçтарма та час мар. «Ав пĕлĕтленет, çумăр килет. Куна пуçтарса пĕ-терер», – тет амăшĕ. Пуçтарса пĕтеререхпе эпĕ велосипедпа килелле таптартăм. Радик шăпах хăйсен сарайĕ патĕнче, тин кăна дачăран çитнĕ. Кишĕр кăларнă, пан улми пуçтарнă. Пĕчĕк тачкипе. «Миçе михĕ?» - ыйтать вăл. «Çуршар миххĕн пĕр сак-кăр», – пĕлтеретĕп. Велосипеда сарайне кĕртсе лартатăп та иккĕн блока тапратса тухрăмăр. Çумăр ӳке пуçларĕ. Пирĕн ан-картинче ӳкмест иккен-ха. Блока çавăрса лартрĕ, бордюр урлă туллипе каçаймасть урапа. Михĕсене тачкăпа туртса пыратăп. Валеркăпа амăшĕ çаплах пуçтараççĕ-ха. Пĕтертĕмĕр. Эпĕ ĕç хатĕрĕсене пуçтарса хурса, кунти сарайне питĕрсе тачкăна туртса килтĕм. Фиса - çуран.

Кил тĕлнелле çывхараспа К. П. хирĕç пулать те кула-кула: «Пĕр хăнăхнă та шав алăпа ĕçлетпĕр. Эпĕ, ак, нӳхрепе улма тасатса ятăм», – тет. Кăштахран вăл Фисăна хирĕç пулать те унпала хавхаланса халаплать.

Çĕр улмине путвала хыврăмăр. Пĕр пĕчĕк миххине пӳрте апат валли Валерка йăтса кĕчĕ. Пан улми качака-па путексем валли турарăм, Валерка шыв вĕрилентерсе сума кастрюль илсе тухрĕ. Сурăм. Утă çыхса патăм такаш-кăпа амăшне. Чăхсем час лармарĕç. Тулă сапса патăм. Кун хыççăн çеç кăштахран ларчĕç.

Пӳртре яшка ăшăтса çирĕмĕр. Сăра ĕçрĕмĕр. «Леш улми юлтăрах, кусене чипер кăларса кĕртрĕмĕр», – тет Фиса кăмăллăн. Ыррăн телевизор пăхрăмăр.

2012. 09. 05. Ирпе пĕлĕтлĕ. Çĕрле çумăр çурĕ. Выльăх пăхрăмăр. Качака сурăм. Валерка апат парса пулăшса тăчĕ. Киоскран хаçатсем илсе килтĕм. Пӳрте кĕрсен вуларăм, тĕлĕрсе илтĕм. Компьютер ятăм, калавсен пуххине çапса вĕçлесе пыратăп. Валерка кайрĕ.

Пĕр пĕчĕк çеç калава – "Пирĕн касра çапла..." – шыраса хăшкăлтăм – балконри шкафра та, пӳртри сентрере те, темиçе хутчен те. Тăнран каймалла халран ӳкрĕм. Апат çисен качакасене çитерсе çӳрерĕм. Шав шухăшлатăп: курнăччĕ-çке, пурччĕ тетĕп.

Каçхи сăвăм тĕлне Фиса та тухрĕ. «Ха, кушак хитреленсе кайнă», – терĕ вăл. «Сĕт паратăп çав», – калатăп ăна. Такам килсе янă кушак çури сарайĕнче качакапа ăшăнса пурăнчĕ, сĕт яра-яра паратчĕ ăна Фиса хăй те. Çӳллĕскер мар. Хура тĕслĕ, мăй айĕпе ури шурă унăн. Халь чăнласах хитреленнĕ.

Пӳрте кĕрсен телевизор ятăм. Çав хушăрах калава шырарăм. Тепĕр сунтăхра компьютерпа çапман папка тупăнчĕ. Унта, ак, – çав калав тата «Владлен» тӳрлетни, çĕнетни. Ăна та шыраса хăшкăлнăччĕ эпĕ. Хĕпĕртерĕм, чун уçăлса кайрĕ.

2012. 09. 06. Кĕçнерни. Ирпе уяр, кăнтăрла пĕлĕтлĕрех. Çумăр çумарĕ. Чăхсене çитертĕм, качака сурăм. Пасара велосипедпа кайрăм. Хывăх 50 килограмли çеç. Тавăрăнса – тачкăпа. Илсе килтĕм. Сарайне кĕртсе миххе антартăм (Радик пулăшрĕ). Фисăпа савăтсене тултартăмăр, юлнине çыхса миххипех хăвартăмăр.

Пӳрте кĕрсен хаçат вуларăм, часах компьютер ятăм. Ĕнер тупса хунă калава çапрăм, пичетлерĕм. Пасара тухса утрăм. Арбус, иçĕм çырли туянтăм. Хамăр çурт патĕнче пăрăнсан подъезд тĕлĕнчех сак çинче Фиса тепĕр хĕрарăмпа ларнине асăрхарăм. Вăл та пасара çитсе килнĕ. Хăйне килĕшӳллĕ, виçеллĕ хура курткăпа вăл, туйи – çумĕнче. «Ак сан валли арбус», – терĕ хĕрарăмĕ Фисăна ман алăри япалана кăтартса. Сăн - питрен начарланнă пек, карчăк чăнласах мăшăрăм. Калаçăвне, çи-пуçне пăхсан илемлĕ. «Эп пӳртре ларнă хушăра çанталăк епле тĕс илнĕ: çулçăсем саралнă, кĕренленнĕ», – сăмахласа илчĕ вăл.

«Леш хĕрарăмне пĕлтĕн-и?» – терĕ Фиса пӳртре апатланнă чух. Хамăр çуртрах юнашар подъездра пурăнакан арçыннăн амрăмĕ-мĕн. Ытларах ялта пурăнаканскерне, куркаланă ăна, камне тавçăрман. Фиса унпа калаçнă самаях та (туяннă япалисене çавă çитерсе панă) ашшĕ фронтовик иккенне, хăйсем çурт лартнине мана каласа парать халь.

Арбус лайăхскер пулнă, иçĕм çырли, хăмăртарах тĕслĕскер, питех мар. «Нумай илмелле мар ун пек чухне», – вĕрентет мăшăрăм.

Анкартинче кӳршĕсем хĕрсех çĕр улми кăларатчĕç. Тытăнсассăн ĕлкĕреймĕп терĕм. Качака валли пан улми пуçтарса килтĕм. Çитерме тураса хатĕрлерĕм. Шыв вĕрилентерсе илсе тухрăм, хывăхне патăм. «Капла нумай тăкать. Пăтратса памалла», – тет Фиса. Качакана вăл сурĕ. Сĕтне кĕртсе лартрăм та тислĕк витрисене тата хутаç илсе – çурт умĕнчи йăран патне. Кавăна татса куритари шывпа çурăм, помидор çыххисене салтрăм, тĕмсене тăпăлтартăм, хăяр çеçкине те кăкларăм. Сарайне хупса кĕтĕм. «Çеçкесене аякках пуçтарса тухмаллаччĕ», – терĕ Фиса. «Тух та пуçтарса хур», – терĕм хăвăрттăн. Тĕттĕм пулнăччĕ.

2012. 09. 07. Çĕрле çумăр çунă. Ир пĕлĕтлĕ. Çил кăнтăр-хĕвел анăçĕнчен. Выльăх-чĕрлĕх пăхрăм, качака сурăм. Фиса икерчĕ пĕçерчĕ. Апатлансан, кансан тренировкăна тухрăм. Яланхи асфальт тăрăхĕнче тăваттă çаврăнтăм. Пӳрте кĕрсен шалт ывăннине туйрăм. Хырăм выçса кайрĕ. «Мĕншĕн хăвна хĕнетĕн?» – тет Фиса яланхилле. Эпĕ те яланхиллех: «Вăй-хала тĕреклетмесĕр ăçтан-ха çĕр пусаятăп, улма кăлараятăп», – тетĕп.

Апат çисен, кансан компьютер ятăм. Калавсен кĕнекине тӳрлетсе пичетлесе хутăм – 208 стр., 19 калав. Пенси илтĕ мĕр. Çумăр вĕçĕмсĕр çăвать. Кăшт тăхтасан тухрăм, выльăх пăхрăм. Сарайĕнчи утă таптанчăкне пĕтĕмпех тасатрăм, витене йăтрăм. Качака сума пӳртрен кастрюль, шыв илсе тух-

рăм. Апатне хатĕрлерĕм. Сурăм. Пӳрте кĕрсе тухсан сарайĕнче илмеллисене илсе путвала антăм, çărана çу сĕртĕм, иртнинче кăларнă çуп-çапа миххе тултартăм, илсе тӳхрăм, çутта сӳнтерсе питĕртĕм. Çӳп-çапа миххипех контейнера кайса пăрахрăм. Чăхсене тулă сапса патăм. Нумай кĕтсе тăмарăм, кĕтĕм. Кăмака улми шуратса ăшăтрăм, çирĕмĕр.

Телевизор ятăм. Футбол: Раççей – Çурçĕр Ирланди (1:0) 2:0. Витене Фиса хупса кĕчĕ.

2012. 09. 08. Уяр. Унтан янкăрах уяр. Выльăх-чĕрлĕх пăхрăм, качака сурăм. Фиса икерчĕ пĕçернĕ. Апат çисе кансан тренировкăна тухрăм. Малтан киоскра хаçатсем илтĕм, çăкăр туянтăм. Хутаçне сарайне çакса хăвартăм та яланхи вырăнта утрăм. «Пурнăç çулĕпе» хаçат парнине илес ăмăртăва шкул автобусĕсем, çăмăл машинăсем киле-киле стадиона кĕчĕç. Утма чăрмав кӳмерĕç. Тăваттă çаврăнтăм та стадиона кĕтĕм, унта çавра çула хирĕçле май пĕр çаврăм тухрăм. Вăтам çулхи ачасен эстафетине пăхса тăтăм, палланă çынсемпе сăмахласа илтĕм. Йăранарти Çинка мăнукĕ Павел Павлов чупрĕ, вăл тăххăрмĕшĕнче вĕренет. Унпа финиш хыççăн сăмахларăм. Ашшĕ, Володя, больницăра терапи уйрăмĕнче выртать иккен. Çитсе килме вăхăт тупăнмарĕ. Пӳрте кĕрсен хаçат-журналпа паллашрăм, вуларăм. Кантăм. Фиса кечу текеннине тума хатĕрленине (помидор, сухан, ыхра) авăртса патăм. Клей илсе сарайне тухрăм, хуçăлнă шĕпĕне çыпăçтартăм, пĕчĕк пăта çапрăм, изолентăпа чĕркерĕм. Пӳрте кĕрсен кофе вĕретсе ĕçрĕм. Кăшт кантăм та тухрăм, качакасене çитерсе çӳрерĕм.

Апачĕсене хатĕрлерĕм, качака сурăм. Ку тĕле темиçе хут та çумăр шапăртатса çуса иртрĕ. Витене хупса кĕрсен апат хатĕрлесе çирĕмĕр. Телевизор ятăм. Компьютер ярса интернетпа шахматла вылярăм. Ладьяна тытнăччĕ, хăй вырăннех лартасшăнччĕ, ăçтине пĕлеймерĕм – çĕнтермеллискер выляса ятăм. Чартăм.

2012. 09. 09. Вырсарни. Пĕлĕтлĕ ир. Картана тухрăм. Паркран пан улми пуçтарса кĕтĕм, ăна турарăм, качакапа путеккине патăм. Катьăна сурăм. Сĕте пӳрте кĕртсе лартрăм та подъезд çурăм. Фиса çутарасшăн мар, пирĕн çулхисем ытти подъездсенче çумаççĕ тет. Леш çуртра Ф. Е. та çумасть тет. Авăнса ӳкместĕп-ха тетĕп. Апат çисен канмалла качакасемпе çӳрерĕм. Пӳрте кĕрсен апатлантăм, анкартине çĕр улми кăларма кайма пуçтарăнтăм. Валерка патне шăнкăравларăм. Вĕсем хваттерĕнче обой çыпăçтараççĕ. Ытлари кун уяртассине кăтартать интернет. Çавăн чух килме пулчĕ ывăлăмăр. Эпĕ тачка туртса анкартине кайрăм, улмуççи патĕнчи тăвата рете тӳрех кăларма пуçăнтăм. Пылчăклăскерне кăларса тăкрăм кана-кана. Апат çыртрăм. Пан улми пуçтартăм. Пылчăклă улмана пуçтарма тытăнтăм çеç-çумăр шăпăртатрĕ. Сарайĕнче лартăм, пан улми çирĕм.

Çумăр çăвасси йăмсан улмана сукмак çине, тачка патне пĕчĕк витрепе йăтрăм. Шĕпĕне, хырмаллине ваннăра çуса улмуççи çумне сĕвентертĕм. Çăмарта çирĕм, кофе ĕçрĕм.

Çĕр улмин пич енĕ типсе тĕс илме пуçланăччĕ, тасатма тытăнтăм та çумăр çума пуçларĕ, аслати авăтрĕ; хытах çăвать. Сарайне тарса кĕтĕм. Çумăр иртсен пуçтарса тачка туртса таврăнтăм. Çĕр улмине сарайне тăкрăм. Пушаннă тăвата миххе çурт умĕнчи ваннăри шыва чикрĕм.

Фиса Ф. Е. - па пĕрле душран çăвăнса илет. Шупка симĕс тĕслĕ йăрăс пальтопа вăл, пĕр аллипе çăвăнмалли япалисене чикнĕ çыхха, тепĕр аллипе илемлĕ туйине тытнă. «Кун пулмасть терĕн-и? Ухмахланатăн», – тет вăл мана.

Пӳрте кĕрсен хывăнса тăхăнтăм, кăштах апат çыртрăм та – душа çăвăнма кайрăм. Аван çăвăнтăм. Килсен кантăм. Фиса качака сума тухрĕ. Хамах хупса кĕретĕп терĕ.

Апат çыртрăм та тухрăм. Качакапа путеккине утă çыхса патăм, сушила алăкне хупрăм, сĕт илсе кĕтĕм.

Чей ĕçрĕм. Телевизор ятăм. Интернет. Шахмат. Шурри-пе. Пешкăпа лашине илсе ферзьне тапăнтăм. Светлана шăнкăравларĕ. Амăшĕ сывлăхĕ пирки интересленет вăл. «Чиперех-ха. Çӳрет, душра çăвăнса килчĕ, качака сурĕ. Халь кĕреймерĕ-ха», – тетĕп. «Салам кала», – терĕ вăл. Нумай та калаçмарăмăр. Компьютер патне пытăм та, «Партия закончена. Вы проиграли. Вы просрочили время», – тесе çырса пачĕ. Манăн çĕнтермелли позициччĕ. Интернета чартăм.

2012. 09. 10. Çумăр. Выльăх пăхрăм. Çумăр чарăнмасăр шăпăртатать. Качакапа путеккине картанах утă çыхса парса хăвартăм. Чăхсене кĕлтери тулла тĕшĕллеттертĕм. Пӳртре апат çирĕм, тĕлĕрсе илнĕ хыççăн кофе ĕçрĕм. Çумăр шăпăртаттаратех.

Кăнтăр иртсен апат çисен качакапа путеккине картаран  кăларса çитерсе çӳрерĕм. Каçалапа çеç çумăр кăшт тамалчĕ, сунчăксăр çӳреме май килчĕ. Чăхсене, качакасене пăхса картана хупса кĕтĕм. Валеркăпа калаçрăм. Шахматла икĕ хутчен те выляса ятăм.

2012.09. 11. Пĕлĕтлĕ, хушăран  уяр. Çил çурçĕр - хĕвел анăçĕнчен. Ирпе 7 градус ăшă. Выльăх пăхрăм, качака сурăм. Киоскран «Хыпар» илсе килтĕм, вуларăм. Хаçата Фисăна патăм, яланхилле. Вулать вăл. «Ха, Айтак вилнĕ, – терĕ. – Вуларăн-и?» Эпĕ кун пирки радиопа ĕнер, паян итленĕ, халь вуланă. Мăшăрăм радио итлесех каймасть çав, телевизор пăхать, чăваш кăларăмĕсене вулать, паллашать. Валя Власовапа телефонпа клаçса илчĕ. «Помидор татах пырса паратăп, хамăр çисе яраймастпăр, кечу туса çитертĕм», – терĕ ăна пĕр-пĕрин сывлăхĕ çинчен ыйтса пĕлнĕ хыççăн. Ф. Е. килчĕ. Пĕр пакет кишĕр  парать çĕр улми кăларма сенĕк парса янăшăн тав туса. Ун-кун çинчен калаçаççĕ. Вăл кайсан: «Кабач-

ки курăнсах выртать те, ыйтрĕ те – патăм, – тет. – Вăт, А. С. çамрăкларахах вилчĕ. Ывăлĕсем çук халь. Пĕри Ленинградра вилнĕ». Эп кун çинчен тĕплĕнрех ыйтса пĕлетĕп: илтменччĕ. Апатлансан канса илтĕм те утма хăнăхма тухрăм. Çил вăйлă пирки урампа та çаврăнтăм хӳтĕрех вырăнсемпеле. Пӳрте кĕрсен тепре апат çирĕм. Кăшт кансан тухрăм. Çĕр улмине тачка çине тиесе ирĕке илсе тухрăм, уçăрах вырăна тăкрăм. Кчачакасем пырса чăрмантарчĕç. Тачкăпа анкартине кайрăм, икĕ хутаç пан улми пуçтартăм, икĕ кавăн, пилĕк кабачки татрăм, ир пулакан купăстана виçĕ пуç касрăм – çаксене пĕтĕмпе туртса килтĕм. Пан улмине сарайне кĕртсе хутăм, ыттине путвала антартăм. Çĕр улми лаприне май килнĕ таран хăйпăтрăм, путвалра вăрлăх шутне ещĕке хутăм, ыттине пӳлмене ятăм, пӳрте япăхраххисене илсе кĕтĕм. «Кăлармасăр касăра вырттарнă пулсан мĕн чухлĕ çĕретчĕ», – тетĕп Фисăна. Халь тасатса путвала хунине каласа патăм. «Аван эппин», – ăшшăн пăхрĕ мăшăрăм.

Дина килчĕ. Диван çинче калаçса ларчĕç малтан, эпĕ апат çиеттĕм. Унтан тĕпелелле ирт тесе чĕнтĕмĕр. Палан çырли илсе килнĕ вăл. «Мана вĕлересшĕн мар мĕн чухлĕн тăрăшаççĕ, – терĕ Фиса. – Светлана мĕн чухлĕ эмел килсе пачĕ. Телефонпа калаçса канашлатăп. Макăрас килет терĕм ăна çапла сĕтел хушшинче калаçса ларнă чух. Макăр тет». «Саша тете мана Шупашкара илсе каять. Твенешрен лавпа тухрăмăр. Хĕлле. Шатăр сивĕ. Шăнмрăн-и, уру шăнмасть-и тет. Çук тетĕп. Хамăн ура шăнать-ха. Çавăн чухнехи пуль халь ура ыратни. Эпир, мĕн, кайран та ачасене мĕн тăхăнтартас-ши, мĕн çитерес-ши тесе пуç ватнă. Халь пенси параççĕ. Çитет. Пурăнмалла та пурăнмалла. Анчах вăй чакса пырать», – шав шакăлтатать те шакăлтатать Анфиса.

Чăхсем лупас пекки çинех лараççĕ те, каяшне Фиса паян кăнтăрла алла пленка тытса тасатрĕ. «Чăхсен айĕнчине татах тасатмалли пур. Тухам-и?» – тет вăл. «Ан чăрман. Чăхсем халь ларнă» – пӳлетĕп ăна.

Тухрăм. Выльăх пăхрăм, качака сурăм. Пӳрте кĕрес умĕн Антонова куртăм. Ăна ыран прицеп лартса параймăр-ши терĕм.

Пӳртре кофе вĕретсе ĕçрĕм. Телевизорпа «Хыпар» пăхрăмăр. Компьютер ярса ыранхи çанталăк епле пуласси çинчен тишкертĕм, вара Валеркăна шăнкăравларăм. Çĕр улми ыйтăвне татнă, ыран кил, малтан пахчара пан улми тататпăр, унтан тислĕк кăларатпăр терĕм.

Телевизорпа футбол вăййи пырать: Раççей Израильпе вылять тĕнче чемпионатне хутшăнас турнирта. Эпĕ – телевизора çывăх креслора, Фиса – сĕтелĕн тепĕр енче. Чăлха çыхать вăл, шут шăрçи çине пусса урине вылятать. «Ак, конфет çи, – ман енне сĕтел çине хурать вăл хутпа чĕркенĕскерне. – Светлана илнĕскер».

Пĕрремĕш тайм вĕçленчĕ. Иксĕмĕр те ларнă çĕртен тăтăмăр. «Мĕнпе вĕçленчĕ?» – ыйтрĕ Фиса. «Иккĕ ноль. Эпир малта», – пĕлтертĕм ăна. Вăл: «Эп çывăратăп», – тесе юнашар пӳлĕме кĕчĕ. Эпĕ кухньăра хăварнă кофĕне вĕрилентерсе ĕçрĕм.

Футбол вăййине малалла пăхатăп. Раççей 4:0 шутпа çĕнтерчĕ. Вунă сехетпе çывăрма выртрăм. Фиса ӳпне выртнă та сăмсапа çытар çинелле темле нăрлаттарса сывлать. Çавăрăнса вырт тесе калатăп темиçе хутчен те. Унтан тăрса çавăрма пикентĕм – месерле çавăрăнтарса вырттараймарăм, айăккăн çавăртăм, капла вăраххăн сывлĕ терĕм.

2012. 09. 12. **Фиса вилнĕ!**

Ирпе радио ятăм, çанталăк çинчен каланине итлерĕм. Фиса çывăрать-ха, эп çăвăннă чухне те вăранмарĕ. Улт сехет те хĕрĕх минутра радио чартăм. Качака сума тухаспа пӳртекӳ алăкне шакаççĕ: кӳршĕ хваттерти Ж. иккен, хуларан машинипе юлташĕсемпех килнĕ иккен студентсем, манран каçару ыйтаççĕ. Качака сусан сĕт кастрюльне алăк умĕнчи пукан çине кĕртсе лартрăм. «Акă сурăм» – терĕм Фисăна чĕнсе яланхилле. Тухрăм, киоскран хаçат кайса илтĕм. Çанталăк ăмăрлă, çумăр ӳккелет. Тренировка тăвас мар терĕм. Пӳрте кĕтĕм. Сĕт кастрюлĕ çаплах ларать. Фиса вăранман. Çывăртăрах. Лайăх кансан ĕçе ăнăçлăрах пурнăçлатăн. Урайĕнчех выртакан икĕ кабачкие шуратрăм, хыртăм, виçĕ çăмарта ярса кашăкпа çăртăм. Виç çын валли икерчĕ пĕçере пуçларăм. Валерка вун пĕр сехетпе çитекен. Çаплах çывăрсан, Валерка çитиччен те вăранмасан васкавлă пулăшу чĕнмелле-ши тетĕп. Икшер-виçшер пай туса икĕ çатма пĕçертĕм. Кĕпе çанни чăрмантарать. Çывăрмалли пӳлĕме кĕрсе пукан çине хывса хуратăп кĕпене. Чăтаймарăм, мăшăрăм патне пытăм. Айăккăн выртаканскерне çавăрса вырттартăм – кăшкăрса ятăм. Алăксене уçса ятăм. «Мĕн пулнă?» – хăйсен хваттерĕнчен тухрĕ Женя.

«Хозяйка вилнĕ. Милицие, васкавлă пулăшăва шăнкăравла-ха», – пулчĕ ман сăмахăм. Вăхăт тăхăр сехет çурă. Светлана ĕçре пуль, карас телефонĕн номерĕпе çавăратăп шăлтăрмана. Çиĕнчех сас пулчĕ. «Света, Света! Мама вилнĕ. Мама вырăн çинче вилĕ выртать», – куççульпе макăрса тухрĕ сăмахăм. Таня кин хватерĕнчех пулмалла. Ун патне шăнкăравлатăп, куççулĕпе пĕлтеретĕп мама вилнине. Унтан Твенеше Валя патне шăнкăравлатăп. «Анфиса, Анисса аппу вилчĕ», – тетĕп ăна та куççулĕпе.

Милицирен килчĕç иккĕн. Çывăрмалли пӳлĕме кĕрсе сăн ӳкере–ӳкере илчĕ пĕри. Зала тухсан çыраканне хамăр паспортсене патăм. Тепĕр енчи кӳршĕри Галя амăшне чĕнсе кăлартăм. Ăна çавăтса кĕретĕп. «Мĕн пулчĕ, Анфис?– тет вăл. Динăна чĕнесшĕн эпĕ. Нимле те Миша Федоровăн ятне аса илейместĕп. ЗАГС пайне, Мария Максимовна патне, шăнкăравлатăп. «Хăвăр кӳршĕри Динăна калăр-ха: килтĕр. Анфиса вилчĕ», – тетĕп. Ыйтса çыраканĕ кирлĕ мар, кӳрше алă пустарнă терĕ. Çывăрмалли пӳлĕме кĕчĕ. Тинкерчĕ. «Утияла уçăр-ха», – хушрĕ вăл. Именни, вăтанни пулчĕ ку самантра манăн утияла сирсессĕн.

Валерка Шупашкартан шăнкăравларĕ. Милицие чĕн терĕ. «Ăна пурнăçланă. Хăвна кĕтетĕп», – терĕм ăна. Фиса патĕнче ик-виç çын пур, пăрахса каяймастăп. Валерка çитрĕ. Эпĕ паспорт илсе больницăна кайрăм. Унта амбулатора карточкине туптартăм. Участок врачĕ патне çитрĕм. «Кунпа мĕн тумалла?» – пăхать хĕрарăм врач. Калатăп. Тĕлĕнсе каяççĕ врачĕ те, сестри те. «Халех вилместĕп-ха, тĕлĕк куртăм, мана илме килнĕ лаша тăхтаса тăрать тенĕччĕ», – сăмахлать сестра.

ЗАГС пайне виççĕ çитрĕм, почтăна – иккĕ. Çумăр лĕпĕстетет.

Валерка тупăк илсе килчĕ васкавлă пулăшу машинипе. Эпĕ тĕлли-паллине пĕлмесĕр нумай утса çӳренĕ хыççăн кивĕ исполком кил хушшинче йĕркеленĕ вырăнтан юман хĕрес, лакпа пиçĕхтернĕскерне, илсе килтĕм. Фисăна çуса тупăка вырттарнă. Илья сак илсе килсе панă пулнă Фадеевсенчен. Çынсем пур. Лараççĕ. Эпĕ çывăрмалли пӳлĕмре телефонпа шăнкăравлассипе лартăм. Иккĕмĕш сыпăкри тăвансене ниепле те тытаймастăп, вара Юрий Васильевпа çыхăнса ăна Альăпа Бориссене пĕлтерме ыйтрăм. Çинка ывăлĕ, Володя, больницăра выртаканскер, врачран ыйтса килнĕ. Иксĕмĕр калаçатпăр.

Качака сурăм, чăхсене çитертĕм. Сарайне хупса кĕтĕм. Çывăх çынсем, кўршĕсем, туссем килсе ларчĕç. Таня кин апат хатĕрлет, икерчĕ пĕçерет. Манăн кабачкирен хатĕрленĕ чустана хунямăшĕ ĕнерех хатĕрлесе лартнăскер тесе тăкнă.

2012.09.13. Кĕçнерни. Уяр. Çил хĕвел анăçĕнчен. Юрий Фадеев ГАЗелĕпе шăтăк чавакансене илсе кайрăмăр. Таврăнасшăн веноксем, тăваттă, пĕри карçынкка, пахаскерсене КПО кил хушшине кĕрсе туянтăмăр. Чус-хăма машинисем тура ларакан, унта каятпăр. «Хурăн пулсан мĕнле?» – ыйтать Фадеев руле тытса пынă май. Илсе çитерчĕ вăл кирлĕ çын патне. Виçĕ хăма антартăмăр шаршанран. Тўлесе хăвартăм. Валерка автобус тупассишĕн канăçсăрланать. Кил еннелле çывхарсан анса юлать те Фадеев каланине шута илсе автостанцине каять. Унта заказ парса хăварать.

Шăтăк чаврĕç: Сергей Петриков, Радик Иванов, кĕрў Валерий Гурьев, Коля Скворцов, Коля Иванов, Вова Петров.

Каçал енчен килчĕç: Гера Вальăпа, Павăл, Маруç – ывăлĕ Сергей машинипе. Унпа чăрăш лăсси хуçса килтĕмĕр. Канашран çитнĕ: Коля Ефимов, мăшăрĕ Валя (кĕрў аппăшĕ), Юрий Гурьев. Килемĕшĕпе сыв пуллашса тухрĕ Валерий Павлов, Маларах Виталий пулнă.

Валерка дискет çинчен çыртарса Фиса сăнне ўкерттернĕ, çыртарнă, Валерка П. рама май килтернĕ.

## Ларионова
## Анфиса Петровна
## 07. 01. 1932 – 11. 09. 2012

Фиса, хӑв асӑннӑ пекех – Янкурас ҫӑвинче. Автобуспа пытӑмӑр. Шоферӗ Вася Андреев. Ефимов ывӑлӗ Саша ҫӑмӑл машинипе пычӗ. Тупӑка антарсан ун ҫине виҫеллӗ татнӑ хурӑн хӑмасем сартӑмӑр. Тӑватӑ венок хутӑмӑр, пӗри – карҫынкка.

«Надежда» кафере асӑнтӑмӑр. Тӑвансене, ҫывӑх ҫынсене Анфисӑна юлашки ҫула ӑсатма пулӑшнӑшӑн тав турӑм. «Хаҫата ҫыратӑн-и?» – пӗлесшӗн пулчӗ Валерка киле ҫитсен. «Тав турӑм вӗт», – хуравларӑм эпӗ.

Фиса, эс кайрӑн.

***

Эс каланисене пӗтӗмпех пурнӑҫлса пыратӑп эпӗ. Тислӗке кӗрӳпе, Валеркӑпа прицеп ҫине тиерӗмӗр те уя ҫитертӗмӗр. Унта кишӗр-кӑшмана кӑлартӑмӑр, сивве кӗртсе ямарӑмӑр. Манӑн куртка вӑчӑрине, ҫухавине юсаттарасшӑнччӗ эсӗ – ҫӗвӗҫсем патне ҫитсе пурнӑҫлаттартӑм ӑна. Анкартинчи анана кӗрӳпе пӗрле пусса тухрӑмӑр, ҫурт умӗнчи йӑрана тасатса пусрӑмӑр. Уйри анана сухалаттартӑм. Ыхрана, эс каланӑ пекех, помидор пулнӑ вырӑна лартрӑм. Уйра вӑррине акрӑм йӗр тусах.

Эсӗ Валя Власована помидор татах пырса паратӑп-ха тенӗччӗ. Ҫитерсе патӑм. «Хаҫатра ҫырмарӗҫ», – терӗ тата Валя. «Паллӑ ҫынах пулман», – тавӑртӑм эпӗ. Пенси енӗпе ӗҫлекенсенчен аслӑраххиех: «Пӗлмен, хаҫата ҫырма мӗншӗн нихӑшӗ те тавҫӑрман-ши?» – терӗ. Куна мӗншӗн калатӑп? Ара, салана тухсан паллана-пӗлнӗ юлташсем, туссем алӑ пама тӑсаҫҫӗ те, эпӗ ик алла хыҫалалла тытса тӑратӑп. Нотариусра Зоя Ершова: «Инсульт. Славная жен-

щина была», – терĕ эп каласа панине итлесен.

«Халех вилесси çинчен калаçар мар-ха. Ачамăрсене кулянтарăпăр, курайман çынсене савăнтарăпăр», – теттĕмччĕ. Тĕрĕсех. Анкартине кайнă чух, ĕç-хĕл вăрăма тăсăлĕ, час таврăнаймăп тесе, качакапа такине картаран кăларса хăвартăм. А. - сенпе ниçта каймасăр çӳреççĕ вĕсем терĕм. Тĕттĕмленсен таврăнтăм. Така А. - сен карта тытнă пайне кĕнĕ-мĕн. Улмуççи туратти çине кармашнă. Кĕтесе хуптĕрлесе: «Хуçи карăнса кайрĕ, ку мĕнле кăнса выртмасть», – патакпа çапнăçапнă такана. Куракансем – Лиля, Лена – тĕлĕнсе каласа параççĕ çакна. Хăйсен пĕр кĕтӳ чухлĕ качаки ку такапа чупрĕ, вĕренлеменни, путеккипе пĕрле, пирĕннисннe ертсе çӳрет.

Ялан калаçатăп санпа, ялан калаçатăп. Пурне те пурнăçлама питĕ йывăр, аран ĕлкĕретĕп. Икерчĕ те пĕçеретĕп. Пукрав ячĕпе кукăль те пĕçертĕм. Качака суса кĕрсен: «Ак, сĕт суса кĕтĕм», – тетĕп. Сĕтне аван парса пычĕ, çавăнпа чăкăт çине чăкăт лартатăп кăмакана. Вăхăтсăрах кайнăн туйăнатăн. Çитес Труйскинче тăван ялна çитсе килесшĕнччĕ – çитеймерĕн.

Спорта пăрахмастăп-ха ку яхăнтах. Канаш районĕнчи Шелтеме те çитрĕм, наци кросне те хутшăнтăм. Савăнмалли пулчĕ пирĕн: «Юратупа шанчăклăхшăн» орден пачĕç. Хаçат илетпĕр пулин те Указа вуламан эпĕр, çынсем каланă хыççăн пăхрăмăр. «Аргументы и факты Чувашии» хаçат корреспонденчĕ хăй килесси пирки хыпарласан кантăк каррисене кирлĕ пек йĕркелерĕн, урай çуса тухрăн. «Мĕн пĕçерес?» – ыйтатăн манран. «Хуран кукли», – персе ятăм эпĕ. Чăн та, юратса çирĕ çамрăк хĕрарăм килсе калаçнăçырнă хыççăн. «Мĕн тăхăнса каяс?» – канашлатăн унпа. «Шăрăх, костюм ан тăхăн», – тет хĕрарăм. «Таса, тирпейлĕ терĕ», – кăмăллăн каласа патăн мана хăна кай-

сан. Орден илме каяс чух: «Клубра сулхӑн, зал хӗвел тӳртӗшӗнче», – тетӗп. Тухрӑмӑр, пыратпӑр. Тӗлӗнсе юлаççӗ хӑшӗсем: ара, медальсене те çакнӑ костюмпаçке эпир. Культура çурчӗн пӗчӗк залӗнче чысларӗç. Концерт хатӗрленӗ. Пӑхрӑмӑр.

Библиотека ӗçченӗсем хӑйсен залне чӗнчӗç. Эпӗ магазина кайса «Шампански» туянтӑм. Каллех сӑн ӳкереççӗ. «Çитес çулла Платин туйӗ сирӗн», – палӑртать ЗАГС ӗçченӗ.

Эпӗ чипер кун – тренировкӑра. Яка çулпа пынӑ чух Элӗк енчен мана хирӗç килекен çӑмӑл машина хӑвӑртлӑхне вӑрахлать те, руль умӗнчи арçын сӑмах хушать. Алӑ çӗклесе саламлатӑп. Унтан тавçӑртӑм: Надя мӑнукӑмӑр-çке! Инçе çула вӑл тус-юлташне руль тыттарса тухать. Ирпе Валеркӑпа Таня кин те çитрӗçчӗç-ха. Тренировка вӗçленсен çурт умӗнчи машинӑсен серийӗсене пӑхса тухатӑп. Акӑ – Самарсен!

Пӳрте кӗрсен хывӑнса тӑхӑнатӑп та кӑштахран сунтӑхран «Шампански» эрех кӑларса кухньӑри сӗтел çине пырса лартатӑп. Валерка фужерсем хатӗрлет.

Хисеп те чыс мăшăрсене.
Кăшт хĕпĕрте те алă çуп –
Кун хыççăн кун, ак, – аллă çул.
Ларсамăр-и кĕрекене.
Ачи-пăчи – пĕр хĕр, ик ывăл.
Ӳстер, çын ту, тертлен – ан ывăн.

Турат каять,  кур: виç енне –
Самар та Питĕр, анăça;
Ĕçре пĕлмеççĕ канăça
Асрах тытса тăван киле.
Çут орден, ай! питех ятуллă,
Чăваш çемйи, пĕл: çураçуллă.

Хисеп çĕклетĕр кăмăла.
Çу кунĕн вăрăм çул кĕске.
Ăш çурт йыша илет кĕтсе
Хĕвел шевлин, кăнтăрла.
Шампань эрех шăп вырнаçуллă.
Сăмах - юмахĕ сумлă-сумлă.

Фиса, эс кайрăн...

***

Фиса, иксĕмĕр пĕрлешнĕренпе мĕн ĕмĕр тăршшĕпех спортран уйрăлмарăм эпĕ. Юлашки вăхăтра кăштах ӳпкелеттĕн пулин те пулăшсах пытăн, ура хумарăн. Ăмăртусене, тепĕр чух эрне, ик эрне хушăллă вăхăта пуçтарăнса кайма пулăшаттăн.

Тĕп ĕçрен уйрăлмасăр илемлĕ литература хирĕнче лараттăм час-чах. Мана чăрмантарман эсĕ, мĕн усăсăр ларатăн тесе ятлаçман. Компьютер туянсан хĕпĕртерĕн çеç. Хамăр укçапа темиçе кĕнеке кăлартăм – сăмах тĕкмерĕн.

Мана тирпейлĕ çӳре теттĕнччĕ. Çи-пуç илтереттĕн, туянса параттăн. Чăннипех маттур хĕрарăм пулнă эсĕ, Фиса. Ачамăрсемшĕн, çемьешĕн тăрăшнă. Ĕçке явăçман, явăçтарман. Канлĕ вырт, çӳлти патшалăхра çӳре. Санпа юнашар выртма ман валли те вырăн уйăрса хăвартăмăр. Часах кĕтсе илмесен аванчĕ...

Фиса...

Хăш-пĕр йывăç çулçă тăкрĕ,
Çулçăлли сайра.
Çил çӳçе вылятрĕ, вăлтрĕ...
Çу ăшши – кайра.

Çимĕк çитĕ, курăк çулăн
Хăш-пĕр çул ирех.
Ят çухалмĕ. Ырă суннăн
Хĕм чечек хĕрлех.

Хăш-пĕр йывăç çулçă тăкрĕ...

Никита Ларионов

# Анфиса, Анисса

на чувашском языке

Издается в авторской редакции

В середине книги – фотографии
на четырех страницах

Компьютерный набор Н. Ларионова
Верстка А.В. Афанасьевой
Дизайн обложки А.С. Дикановой

Подписано в печать 31.01.2013 Формат 60х84/16.
Бумага офсетная. Печать оперативная.
Гарнитурпа Arial Chv. физ. печ. л. 2
Тираж 50 экз. Заказ № К - 394

Отпечатано в типографии ИП Сорокина А.В. «Новое Время».
428034,Чебоксары, ул. Мичмана Павлова, 50/1.
Тел.:(8352) 41-27-98, 46-43-46.
E-mail: newtime1@ mail.ru.